Кузьмин Ф. К.В. Иванов пурнăçĕ çинчен аса илнисем : [ентешсем аса илнисем, Слакпуç ялĕ] / Ф. Кузьмин // Урал сасси. – 2007. – 24, 31 çу.

Аслă поэтăмăра асăнса

# К. В. Иванов пурнăçĕ çинчен аса илнисем

***К. В. Иванов пĕчĕк чухне мĕнле ўснине, пĕлў илнине, вĕреннĕ вăхăтри тата пурнăçĕн юлашки кунĕсем, пархатарлă ĕçĕсем çинчен пурин те пĕлес килет паллах. Çавăнпа та эпир паян кĕскен те пулсан Слакпуçĕнче çамрăк чухне унпа пĕрле выляса ўснĕ, çумĕнче пулнă ентешĕсем каласа панисене пичетлесе кăларатпăр. /Пишпўлек районĕн «Колхозри ĕç» хаçатра çапăнса тухнă вĕсем/.***

## Ачалăхри вăхăтсем

«К. В. Иванов пĕчĕк чухне питĕ йăваш пулса ўсрĕ. Кĕçтук нихăçан та урамра вылянă чухне ачасемпе вăрçса, хирĕçсе çўремен.

Пĕчĕклех каскалама юратаканскер, пĕчĕк кăрман тунăччĕ. Унпа эпир хиртен час-часах çурлапа утвалли çулса килеттĕмĕр. Ăна хирте çўреме килĕшетчĕ. Çав майпа пире вăл вăлта илсе час-часах Силпи улăхне пулă тытма илсе каятчĕ.



К. В. Иванов И. Я. Яковлевпа.

Унта пурăнаканĕсем куçса кайнă ял вырăнĕ пурччĕ. Константин çав çынсем ăçта, мĕншĕн хускалнине ыйтса пĕлесшĕнччĕ.

Ялти шкулта вĕреннĕ вăхăтра вăл вĕренў енчен те, дисциплина енчен те малта пыратчĕ, ашкăнса çўренине нихăçан та курман. Питĕ тăрăшса вĕренетчĕ, шкултан Мухтав хучĕпе тухрĕ. Нумай çĕре пĕлў пухма кĕрес тесе çўрерĕ, юлашкинчен Чĕмпĕр хулине кайнă терĕç. Унта К. Иванов мĕнле вĕреннине пĕлместĕп, анчах 1906-1907 çулсенче пулас, вăл килне таврăннине астăватăп. Çитсенех ĕçе пикенчĕ: ака турĕ, тырă вырчĕ, кĕлте кĕртрĕ, платник ĕçне тытăнса шкаф ăсталарĕ, хăйсем пурăнакан пўртне шал енчен илемлетрĕ.

Çавăнтах хăй те çыратчĕ, картинăсем ўкеретчĕ. Астăватăп-ха, Кĕçтенттин пўрне хулăнăш 2-3 тетрадь тултарнăччĕ. Çавсене пире вула-вула паратчĕ. Унта Нарспи çинчен те пурччĕ, ăна вăл: «Çырса пĕтереймен-ха», — тетчĕ. «Юмăç карчăкĕ» сăвă та пур пек астăватăп. Ăна хальччен эпĕ вуламан та, çын каланине те илтмен. Пĕррехинче Константин питĕ хуйхăллă çўрерĕ, çав вăхăтра хăй çырнă тетрачĕсене çухатнă пулнă иккен.

Ялта пурăннă вăхăтра К. Иванов яланах ватăсем патне кайса калаçса ларатчĕ, вĕсенчен халапсем, юмахсем тата пурнăçра пулса иртнĕ ял хыпарĕсене çырса илетчĕ.

Хăш вăхăтрине астумастăп, пĕррехинче Турăпа патша çинчен ашшĕпе тавлашса кайрĕç. Ашшĕ: «Патшасăр пурăнма пулать, Турăсăр — çук», — терĕ. «Патша та кирлĕ мар, Турă та çук», — хуравларĕ ывăлĕ. Чылай тавлашсан, аслăраххи тўсеймесĕр аллинчи кĕнекине çĕклесе çапса пўртĕнчен тухса кайрĕ.

1914 çулта К. Иванов вĕреннĕ вăхăтрах чире пула килне таврăнчĕ. Вырăн çинче те кĕнеке, хаçат вулатчĕ тата çыратчĕ. Амăшĕ ăна шеллесе: «Ачам, ма чирлĕ пуçупа вулатăн-ха?» —тетчĕ. Вăл вара: «Вăхăта ахаль выртса ирттерес килмест», — тесе хуравлатчĕ.

Çапла пĕр çул чирлесе выртнă хыççăн, 1915 çулхи пушăн 26-мĕшĕнче вăл вăхăтсăр куçне хупрĕ. Виллине виçĕ кун килĕнче тăратрĕç. Ăна пытарма пĕтĕм ял çынни пухăнчĕ. Куççуль тăкакансем нумай пулчĕç. Эпир те, унăн пĕчĕк чухнехи çывăх юлташĕсем, питĕ хытă эрленсе макăртăмăр. Кĕçтенттине пачăшкăсăр пытарчĕç. Çав çулхи çуркунне унăн вил тăпри тавра Квинтилиан шăллĕ карта тытса çавăрчĕ, йывăçсем лартрĕ.

Кĕçтукăн йăвашлăхĕ, çемçе кăмăлĕ, унăн çепĕç чĕлхи, калаçнисем пирĕн асран халĕ те тухмаççĕ. Вăл халиччен пурăннă пулсан тата чылай илемлĕ кĕнеке çырса кăларнă пулĕччĕ. Анчах унăн вăхăтсăр вилĕмĕ ăна пиртен ĕмĕрлĕхех туртса илчĕ.

***ПЕТРОВ юлташĕ.***
***/1940ç., çĕртмен 3-мĕшĕ, 42№/.***

## К. Иванов çинчен...

1909 çулхи кĕркунне мана атте: «Ялта пурăнса пурнăç тăваймăн, акă сана виçĕ тенкĕ, Чĕмпĕре кайса пĕлў пухма кĕр. Эсĕ пултаратăн, хамăр ялти шкултан та лайăх вĕренсе тухрăн», — терĕ. Вара эпĕ икĕ юлташпа пĕрле Куславккана кайрăм, унтан пăрахутпа Чĕмпĕре çитрĕм. Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕмелли экзамена пама Самар, Чĕмпĕр, Хусан, Ĕпхў кĕпĕрнисенчен тем чухлĕ чăваш ачи пынăччĕ. Шкул карти туллиех. Çывăхраххисем лашасемпе çитнĕ. Ун чухне пĕтĕм чăваш халăхĕ валли те çав Чĕмпĕрти шкул анчах пулнă. Вĕренме пынă ачасен шучĕ пилĕк çĕртен те иртет тетчĕç. Çак йышран пире, аллă пилĕк çынна, пĕрремĕш класа илчĕç.

Малтанхи эрнерех кĕнекесем пачĕç. Вĕсенчен чăвашлисем иккĕччĕ. Пĕри — «Чăваш юррисем», тепри «Сказки и предания чуваш» ятлăччĕ. Каярах вĕсем чи юратнисем пулса тăчĕç. Ку таранччен эпир тăван чĕлхепе çырнă юрă-сăвăсене курман, вуламан. Чăваш юррисене нотăсемпе пичетленĕччĕ. Вĕсене вулама пĕлекен ачасем часах юрлама тытăнчĕç. «Чăваш халапĕсем» текен кĕнекери сăвăсене вулаттăмăр. Кунта «Арçури», «Тимĕр тылă», «Калашников купса Кирибеевич опричникпа çапăçни çинчен хунă юрă», «Нарспи» поэма тата ытти произведенисем те пичетленсе тухнăччĕ.

Ун чухне Чĕмпĕр шкулĕн картишĕнче пысăк чул çурт тума пуçларĕç. Кашни кун тенĕ пекех уроксем пĕтнĕ хыççăн эпир, вĕренекен ачасем, çавăнта каяттăмăр. Унта Чăваш шкулĕн пуçлăхĕ Иван Яковлевич та кашни кунах туяпа уксахласа утса пыратчĕ. Çакăнта ĕçленĕ чухне эпĕ К. В. Иванова та куртăм. Пĕрре эпир Квинтилиан Иванов ятлă юлташпа çўллĕ çурта тума кирлĕ материал çĕклесе хăпарнă чух пире хирĕç наçилкка илсе анакансенчен пĕри: «Квинтилиан, авă çавăнта илсе кайăр!» — терĕ. Шăллĕ ăна: «Юрать, пичче», — хурав пачĕ. Ку Квинтилиан пиччĕшĕ К. В. Иванов пулнă-мĕн. Эпĕ ăна 3-мĕш класра вĕренекен ачасенчен пĕри пулĕ тесе шухăшланăччĕ. Каярах тин вăл «Нарспи» авторĕ пулнине пĕлтĕм, унтан тата вăл Чăваш шкулĕнчи хĕр ачасен пайĕнче рисовани вĕрентни çинчен илтрĕм.

Эпĕ иккĕмĕш класа куçсан Константин Васильевича лайăхрах пĕлсе çитрĕм. Унăн шăллĕ Квинтилиан мана: «Эсĕ фотографи ĕçĕ çинчен пĕлесшĕнччĕ, айта пичче патне, кăçал вăл фотоаппарат илнĕ, фотоўкерчĕксем тума вĕренсе çитрĕ, халĕ шкулти ачасене вĕрентме шухăшлать», — терĕ. Вара çав кунах Квинтилианпа Константин патне кайрăмăр. Вăл çĕнĕ çуртăн çўлти хутĕнче пурăнатчĕ. Унта сăн ўкерчĕксем пичетлеме ятарласа тĕттĕм пўлĕм тунă-мĕн. Вара унта ĕçлеме тытăнтăмăр. К. Ивановран фото ĕçĕ çинчен нумай пĕлтĕм. Унччен эпĕ фотографи ăсталăхĕпе кĕнекесем тăрăх паллашма тытăннăччĕ ĕнтĕ, анчах хам куçпа курса, хам алăпа туни мана питĕ нумай усă пачĕ. Сăн ўкерчĕк тума вĕренекенсем кунта чылайăнччĕ. Кирлĕ хатĕрсене илме Константин Васильевич хăйĕн укçине паратчĕ. Çапла унăн пуçарăвĕпе Чăваш шкулĕнче фотокружок уçăлчĕ. Çав вăхăтра шкулсенче нимĕнле кружоксем те пулман вĕт, вĕсем çинчен илтмен те.

К. Иванов питĕ хастар та пултаруллă çын пулнă. Вăл сăвăсем çырас тĕлĕшрен кăна мар, живопись ĕçĕнче те нумай тума пултарнă. Çуллă сăрăсемпе этем сăнĕсене лайăх ўкеретчĕ. Чĕмпĕр шкулĕнчи столяр мастерскойĕнче вĕрентекен старикĕн тата хăйĕн амăшĕн сăнĕсене питĕ аван тунăччĕ. Ўнер ăсталăхне поэтăмăр шкулта вĕренмен. Ăна алла илме май тата вăхăт пулнă пулсан, çак тĕлĕшпе чаплă çынсен ретне кĕрес шанчăк пурччĕ.

К. В. Иванов хăйĕн пултарулăхне, хастарлăхне пĕр май ўстерсе пыма тăрăшнине кураттăмăр. Вăл хăйĕн произведенийĕсене питĕ лайăх тума тăрăшатчĕ. Çакна акă ăçтан курма пулнă: вăл вырăсларан чăвашла куçарнă чухне Чĕмпĕре тĕрлĕ вырăнтан килнĕ ачасене вуласа кăтартатчĕ, вара итлекенсем мĕн шухăшлани çинчен ыйтатчĕ. Çакăн хыççăн татах якатса çыратчĕ те куçарнă япала питĕ аван пулса тăратчĕ. Эпир, Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренекен ачасем, Кĕçтенттин малашне татах çĕнĕ произведенисем çырассине кĕтеттĕмĕр. Çавăнпа эпĕ хам юлашки класра вĕреннĕ чухне К. В. Иванов чахоткăпа чирлесе вилнине илтсен питĕ хурлантăм. Ытти юлташсем те çамрăк поэт çут тĕнчерен уйрăлни пирки нумай хуйхăрчĕç. Çапла пирĕн хастар поэт 25 çултах çĕре кĕчĕ.

***Ф. КУЗЬМИН.***
***/1940 ç., çĕртмен 8-мĕшĕ, 44№/.***

***И. ПЕТРОВ хатĕрленĕ.***
***/Вĕçĕ пулать/.***

# К. В. Иванов пурнăçĕ çинчен аса илнисем

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/.

## Юбилее хатĕрленетĕп

Эпĕ мĕн ачаран Константин Васильевич произведенийĕсене юратса вулатăп. Вĕсене вăл çăмăл та ăнланмалла чĕлхепе çырнă. Çавăнпа эпĕ унăн «Нарспи» поэмине тата «Тăлăх арăм» ятлă сăввине юбилей кунне пăхмасăр калама вĕрентĕм. Кунсăр *пуçне çав уявра хамăрăн* Мичурин ячĕпе хисепленекен колхозăн ĕçченĕсене пухса чăвашсен аслă поэчĕн К. Ивановăн пурнăçĕпе творчестви çинчен калаçу ирттерме хатĕрленетĕп. Колхозниксем поэтпа питĕ интересленеççĕ, унăн «Нарспи» поэмине тата ытти сăввисене пĕрле пухăнса вулаççĕ.

Ваттисенчен чылайăшĕ К. В. Иванова астăвать. Манăн асанне мĕн виличченех: «Вăл паянхи пекех манăн куç умĕнче. Çамрăкскер, Чĕмпĕртен таврăнса пирĕн пата, Кайракла, пырсан ытларах ватă çынсемпе калаçнăччĕ. Унăн кăмăлĕ çемçеччĕ», — тесе аса илетчĕ.

***А. ЗАХАРОВ.***

**/1940 ç., юпан 28-мĕшĕ, 81№/.**

## К. В. Иванов ячĕ ĕмĕрех юлĕ

К. Иванов питĕ ĕçчен çынччĕ, нимĕнле ĕçрен те пăрăнса тăман. Вăл яланах пирĕнпе, вĕренекенсемпе, пĕрле пулма тăрăшатчĕ. Чĕмпĕрти шкулта çĕнĕ чул çурт лартнă çĕрте эпир хамăр та вăй хураттăмăр. Пĕррехинче çапла пулчĕ. Эпир, пĕр ушкăн ача, айккине пăрăнтăмăр та калаçса тăратпăр. Çав самантра пирĕн çумран хуларан таврăнакан Константин иртсе пырать. Эпир калаçнине илтрĕ те: «Айтăр, ачасем, ĕçлер», — терĕ. Хăй çавăнтах наçилкка тытса иккĕмĕш хута кирпĕч йăтма пуçларĕ.

К. В. Иванов вилни çинчен пирĕн шкул часах пĕлчĕ. Кунта вĕренекен ачасене пурне те хурлăхлăн чан çапса пĕрле пуçтарчĕç. Поэта пĕтĕм шкулĕпе пухăнса асăнтăмăр, куççуль юхрĕ.

Ĕмĕрсем иртĕç, саманасем улшăнĕç, К. В. Иванов нихăçан та манăçмĕ, унăн ячĕ ĕмĕр-ĕмĕре юлĕ.

***ЛУККА ЭРХИПĔ.***

**/1940 çулхи чӳкĕн 16-мĕшĕ, 86№/.**

## Çемьери чи кăмăллă çын

Константин Иванов пирĕн пата чăн та час-часах çӳретчĕ. Пуринчен ытла ман асра çакă юлнă: аттесемпе пĕрле сĕтел хушшинче калаçса ларнă чухне вăл шавах



*К. В. Иванов /1906 ç./.*

кĕсйинчен хутпа кăранташ кăларатчĕ, тĕрлĕрен япаласем ӳкеретчĕ. Мĕн çинчен калаçнине астумастăп, ун чухне пĕчĕккĕ пулнă.

Тата Константин Васильевич часчасах ял тулашĕнче хăйсен çуртне хирĕç ларакан ту çине çӳретчĕ. Çав тĕлте пĕчĕк çеç çăл тапса тăратчĕ. Эпир, ялти вĕт-шакăр ачасем, Константин Васильевич кайсан вăл ларнă вырăна пырса пăхаттăмăр та туртса пĕтереймен пирус тĕпĕсем купи-купипе йăваланса выртнине тупаттăмăр. Çапла килĕнче те çырса, ĕçлесе ларнă вăхăтра питĕ нумай туртнă тет.

К. Иванов кĕнекисем пичетленсе тухсан ун пирки питĕ нумай калаçатчĕç. Букварьне «ку чăваш шкулĕсем валли кăларнă чи лайăх кĕнеке» тесе ырлатчĕç. «Нарспи» поэмăна пĕр-пĕринчен илетчĕç, учительсем халăха вула-вула паратчĕç. Пĕлĕшĕсем поэт çинчен: «Вăл çемьери чи кăмăллă çын», — *тесе асăнатчĕç.*

***Д. ГРИГОРЬЕВ.***

**/1940 çулхи чӳкĕн 16-мĕшĕ, 86№/.**

## Унăн сăмахĕсем халĕ те асра

Пĕрре эпир юлташпа К. Иванов патне класс валли кăранташсемпе хутсем илме кайрăмăр. Пысăк мар пӳлĕм. Константин сĕтел хушшинче ларать. Аллинче çап-çутă пĕчĕк çĕçĕ. Вăл хулăн картон евĕрлĕ хăма татăкĕ çинче темĕскер каскалать. Сĕтелĕн пĕр кĕтессинче çавăн пек татăксем темĕн чухлех купаланса выртаççĕ. Вăл эпир кĕнине сисмен те пулас. Пĕр хускалмасăр тăрăшать. Сĕтел çумнех пырса тăтăмăр. Константин Васильевич пуçне çĕклесе пирĕн енне пăхрĕ. «Килĕр, килĕр, ачасем. Мĕн ĕçпе-ха эсир?» — терĕ. «Хут тата кăранташсем илме килтĕмĕр», — тетпĕр эпир. Вăл пире тетрадьсем, кăранташсем пачĕ. Эпир çаплах каймастпăр — Константин Васильевич мĕн каскаланине пĕлес килет-çке. Чăтаймарăмăр: «Мĕн тăватăр эсир?» — тесе ыйтатпăр. «Ку, ачасем, букварь валли ӳкерчĕксем. Акă курăр, ку — упа, ку — кашкăр, акă ача лашалла вылять... Эсир букварь вĕреннĕ вĕт. Унта ӳкерчĕксем çаксем пулаççĕ те ĕнтĕ. Вĕсене хут çине ак çапла куçараççĕ...». Вăл таса хут илчĕ те пĕр ӳкерчĕкне пичетлесе кăтартрĕ. Ун çине эпир вăрахчен тĕлĕнсе пăхрăмăр.

Эпĕ Константин Васильевич патĕнче вĕреннĕренпе 27 çул иртрĕ. Унăн «Нарспи» поэминчи:

***«Чипер ача Сентти пур,***
***Чупса çӳрет урамра,***
***Кĕвентине утланса***
***Ача вылять лашалла», —***

тенĕ вырăна вуласан, ман ума сĕтел хушшинче букварь валли ӳкерчĕксем касса хатĕрлекен Ивановăн çутă сăнĕ тухса тăрать. Унăн куçĕсем ачанни пек таптаса та яр уçă, тутисем ăшшăн кулаççĕ, çепĕç сасси хăлхана ачашлать.

***Г. МОЛОСТОВКИН.***

***/1940 ç., чӳкĕн 16-мĕшĕ, 86№./.***

## Măн кăмăллă çын пулман

Асламăшĕ каланă тăрăх, Константин Иванова Пелепейре вĕреннĕ чухне хулари ачасем нумай тарăхтарнă, виртленĕ, мăшкăлласа кулнă, пĕрре хĕненĕ те иккен. Константин Васильевич çи-пуç тĕлĕшĕнчен те, çынпа калаçас-тăвас енчен те хăйне питĕ культурăллă тытатчĕ. Кирек хăçан та лăпкăн, пĕр тикĕс утса çӳретчĕ. Çынсемпе харкашни нихăçан та пулман. Анчах ăна ниепле хавшак, хуçăк кăмăллă е *тепĕр енчен — мăн кăмăллă çын* тесе калама çук. Чăн та, вăл шавах тем çинчен шухăшласа çӳренипе, çынсемпе ытлашши калаçсах кайман пирки хăшĕ-пĕрисем ун çинчен апла та капла шухăшлама пултарнă ĕнтĕ.

Хуть те хăш ĕçе те юратса ĕçленĕ, çын шучĕпе пурăнасси çинчен нихăçан та ĕмĕтленмен. Художествăллă пултарулăх тĕлĕшĕнчен таланчĕ пысăк пулнă. Ашшĕн портретне вăл çав тери чăна çывăх тунăччĕ.

1912 çулта эпир унпа Чĕмпĕре пĕрле кайрăмăр. Çула май пăрахутпа Ĕпхӳпе Хусан урлă иртрĕмĕр. Чĕмпĕре çитсен сăн ӳкерттертĕмĕр. Кайран хăйĕн карточкине мана **«На память племяннице»** тесе çырса пачĕ.

***П. КУХАРЕВА***
***каласа панинчен.***

***/1940 ç., чӳкĕн 16-мĕшĕ, 86№/.***

***И. ПЕТРОВ хатĕрленĕ.***